Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Гордеева Светлана Денисовна**

**Книга: Верить в чудеса = Тĕлĕнтермĕшсен тĕнчи**

**Стихотворение: Пулмăш**

Пур упа та кашкăр,
Чалăш куç куян,
Пăшипе пакша та,
Чĕрĕп, тилĕ сан.

Тĕнчипе те çук-тăр
Ман чĕр чун пекки.
Çын патне ма тухтăр –
Ĕмĕтре пирки.

Ячĕ ун йĕркеллĕ:
Çăмхăлхахӳре.
Вăрăм та илемлĕ
Кăпăшка хӳре.

Шĕшлĕ çеç, пăхсассăн,
Хăлхисем патвар.
Çывăрса тăрсассăн
Çаврăнчĕ вăр-вар.

Хăлхине вылятрĕ
Вертолёт пекех.
Вăрмана вăратрĕ –
Уншăн пурпĕрех!

Хыр çинче те меллĕ
Уншăн пурăнма.
Лăсси çеç йĕпсемлĕ –
Кансĕр çывăрма.

Вăрăм хӳри – мамăк,
Витĕнсе выртмах,
Камшăн сивĕ – тамăк,
Уншăн ав – çăтмах.

Шĕкĕлчет пĕр вĕçĕм
Хыр йĕкелĕсем
Ун патне çӳреççĕ
Чи хăюллисем.

Эп нивушлĕ суйрăм –
Пултăм килĕнче,
Катачиллĕ туйрăм
Хыр лăсси çинче.

Шăппăн-шăппăн лартăм:

Лайӑх иккӗне!
Тӗпчесе сӑнарӑм
Уйӑх сӑпкине.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.